К С(чув)
А 36
19275.чув.

КОНТРОЛЬНЫ
ЭКЗЕМПЛЯ

ГЕННАДИЙ АЙХИ

# ЧĔРĔ ТĔВĔ

## ЧĔРĔ ТĔВĔ

### 1.

Упа пек мĕкĕрсе ямалăх
чĕре тени кӳтсе ҫитсен,
сĕтел урисене чăрмалăн
пушмакăн пуҫĕпе ирччен.
Вăй пĕтĕ те — йăваш та сапăр,
йĕркеллĕ пулăн ирхине.
Кашни сăмах хура шăна пек
ӳтри кашни тар шăтăкне
ҫӳҫентермешкĕн пусласассăн —
нимех те мар. Нимех те мар.
Мĕнпур ӳт-пӳ сурать пулсассăн —
ыратнине кăшт чакарма
ӳт-пӳ калăпăшне чакар эс.
Пуҫна аллусемпе хĕстер.
Шăлна ҫырт. Чăмăртан та — лар эс.

Саватăн канлĕхе? Чипер!
Вăл тирĕкри шӳрпе пек — канлĕх,
тăкмасăр утас тен пулсан,
утту — кăштăртатса пымалăх
асăрханулла пултăр сан.
Е ӳт-пĕвӳ тачка та лĕнчĕр,
ҫемҫе те сĕлпĕр пулмалла,—
ҫĕре ватса, чулсем чĕтреччĕр
ун айĕнче — ку ӳт, паллах,
чĕвен тăмасть вăл. Карăнмаҫҫĕ
шăнăрĕсем. Вĕри хĕмсем
ӳтре чĕлтĕртетсе хыпмаҫҫĕ.
Симметри саккунне сиссе,
хăех тепĕр енне куҫать вăл —
шĕвек ӳт-пӳ. Куҫать — юлхав.
Хăй те сисмесĕрех упрать вăл

турилккери лăпкăлăха.
Ху канлĕхне çапла тирпейлĕн
упраканскер! Утту пĕртте
ан улшăнтăр, ялан илемлĕ,
этем утти пек тӳрĕ те
сулмаклă пултăр, ан чĕтретĕр
тесен — эс тух çынсем патне,
пĕлтер — ăшра мĕн кӳтнине те
ӳте туртса ыратнине
мĕнпур саспа!
Анчах çынсем
алла — ал пама мар тытаççĕ,
сан аллуна каллех вĕсем
ал таппине тытса пăхма çеç
пырса хыпашлĕçĕ тесен —
ан тух!..
Килĕсенче тирпейлĕн
сан ал таппи шăпланасса
кĕтекенсем — сăпайлăн, меллĕн
шур перчеткисене хывса,
ан пусчăр сан енне пĕр утăм,
ан çулăхчăр тесен — ялан
сан хăвăн ирĕклĕ те çутă,
илемлĕ, çӳллĕ пулмалла!

2

Такам калан̆ă: пурнăç — тĕлĕк...
Çук! Эп — ун чĕрĕ çутинче!
Шĕлепке мар, хăлхаллă çĕлĕк
пасартăр манăн пуç çинче —
кашни утăмранах тирпейлĕн
хывас пулсассăн та ăна —
эп йăнăшмăп: чăн-чăн чĕреллĕ
чăн-чăн çынна, гражданина
чыслатăп — ят-шывне пĕлмесĕр!
Енчен те эпĕр йăнăшсан —

хăш чух хисепĕмĕр чĕресĕр
мĕлкесене тивес пулсан —
Руç талккишпе — сенкер те хулăн
юр айĕнче — вĕриленсе —
тапаççĕ — итлĕр! — ыратуллăн
пирче пуçланă чĕресем.

Çапла, куллăрсене пытарăр:
эсир илтместĕр вĕсене.
Смоленск тăпри шăлса хăварнă
салтак чĕри сас панине
вунвиçĕ çул тăнлатăп эпĕ.
Енчен эп шăпланас пулсан —
вăл çиллĕн тапнине илтетĕп.
Канать вăл — ман чĕре тапсан.

3

Тĕнче Пуррин çути эс — маншăн.
Куçа çак çутă шартнă чух,
кунçулăмра калас сăмахшăн
санран кирли эп тупас çук.
Сан йышунта пăшăлтататăп
çакна эп хурлă ăшăмра.
Пĕр саншăн çеç айван курнатăп
кичем, талпас калаçура,
ĕçме сĕнсен, «тавсси» теетĕп
çак йыш пĕлмен-курманнине...
Шавра эп — шăплăха итлетĕп,
«Кама калам чун хурлăхне?..»

Анчах — итлер-и халь, ак, манăн
кӳрше — çак вăрăм йĕкĕте,—
кирек хăш вăхăтра калана
кирек мĕнле сăмахĕ те
хăть камшăн та çемçе те лайăх,

юравлă тухтăрччĕ тесе,
тутисене ялан сăпайлăн
ачаш ача пек йĕпетсе,
хăй те туймасăр пур эртелшĕн
пĕччен тертленекен этем —
вăл — кайăксем пек алăсемшĕн
ĕçме сĕнет. Ĕçер-и, тен?
Анчах — ун пек алсем курман эп.
Хĕл варринче ĕне кӳлсе,
тĕл-тĕл кĕренленсе хуралнă,
кӳтсе тăртаннă алăсем
пĕрре те кайăксем пек марччĕ.

Çил — витеретчĕ шăмшака.
Хул-çурăм сурнинчен чухлатчĕç
хĕрарăмсем çанталăка.
Пĕр авăртан пăтавкканa та
çав çул тулатчĕç улмасем.
Шăн çĕр çыпăçнипе ытла та
шултăраланнăччĕ вĕсем.
Каçарăр та — унта курсаттăм
çара алăсене, хура
Алăсене çеç!..

Эй, хăватăм,
шалти сăваплă ăнкăрав,
чун илтĕвĕ! — упра чĕрхаллĕн
тăван асапăн сассине!
Мĕнле сăмах пусарĕ халĕ
асри салху сăмахсене?
Ăру ахлатнă пек, тапранчĕ
анне юрри ман асăмра,—
çĕкленчĕ... Ӳкрĕ те аманчĕ
Садра... Чунра... Кунти йышра.
Каларĕ, тейĕн: ăшăнаймĕç
шăнса пăрланнă кайăксем...

Асра та халь çамрăкланаймĕç
тăван хĕр-арлăх сăнĕсем.
Чун калăпăшĕ пек упранĕ
çак юрă, шăппăн ыратса,
ăна тăнланă май, сăнланĕ,
асри куç курăмне шартса,
выç ял... Выç кĕр... Асри,— мĕнпурĕ,—
ялан — выç сăн пек хураскер.
Вил тĕслĕ — Çеçпĕлĕн «шыв-юрĕ»,
ун кайăкне пытарнăскер...

4.

Тĕнче Пуррин çути эс — маншăн...
Ăшра анчах çакна калам.
Кунта эп — урăхла сăмахшăн.

Антив, эп сирĕнпе пулам
яка хут укçасем тултарнă
йăп-йăпăркка кĕсъе тĕпне
ирĕксĕртен пырса çакланнă
тусанлă пăхăр вырăнне,—
мĕнпур саспа янрасчĕ унăн —
нимпе те çапăнмалăх çук.

Салху ирпе лăс çумáр çунăн,
контрабассем сĕрленĕ чух —
антив, пулам эп чĕмсĕр çекĕл,
тумтир çеклийĕ вырăнне,—
плащпа кашне те явлăк çех-и —
пулать çакмашкăн ун çине
плащран кăшт йывăр япала та.
Ĕшенмĕ аллăм — йывăра
çакмаççĕ алăран нихçан та.

Ача чухне эп Атăлра
ула кушак çури курсаччĕ.

Тем çакнăччĕ ун мăйĕнчен.
Тинкертĕм — чул хура курнатчĕ...

5.

Пите сухал та тĕксĕмлетнĕ,
çапах та камшăн та пулсан
пулас килет алла вĕрентнĕ
упа çури пек хушăран.
Эп хам вăя шанми пулсассăн,
вĕчĕхӳ çеç юн таппинче
хĕрхӳн йӳçмешкĕн пуçласассăн,
ӳт-тир сисмелĕх пит çинче
вĕри куçсен мускулĕсем
йывăрланса туртăннине те
туймалăхах пулса çитсен —
епле пулин те, кам патне те
пулин — каçпа е ирхине —
сăлтавсăр-мĕнсĕрех кĕресчĕ,
вĕри вителĕкӳ çине
çил шăнтнă пуçăмпа ӳкесчĕ.
Сан аллусен вĕрилĕхне
туясчĕ çеç... Вара — çитет те:
каллех пĕлетĕп — эс шанан.
Эс маншăн Атăл та, анне те,
çĕршыв пек кирлĕ эс мана.

*1954—1956, Мускав.*